## Çуллахи ĕç чĕрĕкĕ

# Каникул кунĕсем усăллă иртрĕç

Шкул ачисен каникул кунĕсенчи ĕçпе канăвне тĕрĕс йĕркелесси шкулсен тĕп ĕçĕсенчен пĕри пулса тăрать. Çак ĕçе Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн, район администрацийĕн пуçлăхĕн, район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн йышăнăвĕсене кура йĕркелесе пынă. Ку тĕлĕшпе районта ятарлă комисси те пур. Вăл ачасен канăвĕ, вĕсен сывлăхне сыхлас тата ĕçпе тивĕçтерес, пушар хăрушсăрлăхĕ енĕпе ĕçлет.

Ачасен çуллахи канăвне йĕркелессин ыйтăвĕсене пĕр хут кăна пăхса тухман. Ку ыйтусене ачасен канăвне йĕркелессин, сывлăхĕсене сыхлассин тата ĕçпе тивĕçтерессин ведомствăсем хушшинчи комиссийĕнче те, район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи коллегире те, директорсемпе вĕсен çумĕсен канашлăвĕсенче те, ачасен çуллахи ĕçпе канăвне йĕркелессипе районта туса хунă комисси ларăвĕсенче те сăмах пынă.

2008 çулта ĕçпе кану лагерĕсене 18 шкулта йĕркеленĕ. Вĕсене 540 вĕренекен хутшăннă. Шкулсенчи сиплев лагерĕсене 24 шкулта 1075 вĕренекен хутшăннă. Профиль лагерĕсене 10 шкулта йĕркеленĕ, вĕсенчен 5-шĕ экологипе биологи енĕпе, 3-шĕ спорт енĕпе тата активистсем, компьютер тата авиамоделировани енĕпе пĕршер.

Москакассипе Чуманкасси шкулĕсен базипе усă курса районти социаллă пулăшу центрĕ урлă 150 вĕренекен каннă. Ытларах кунта çемье условийĕсенче йывăртарах пурăнакан ачасене явăçтарнă.


Ачаран ĕçе хăнăхса ӳсетпĕр.

Районти вĕрентӳ пайĕ шкулсенчи лагерьсене кăнтăрлахи вăхăтра çӳремелли программа пуçаруçи пулса тăрать.

Кăçал уйрăмах республикăра профиль лагерĕсем çине ытларах тимлĕх уйăрчĕç. Мĕншĕн тесен профиль лагерĕн ĕçĕ-хĕлĕ вĕренекенсен вĕрентӳпе тĕпчев ĕçĕпе çыхăннă, ачасене çуллахи лагерьсен ĕçне тачăрах явăçтарма май парать. Сăмахран, Нискасси, Юнкă шкулĕсенче вĕренекенсем тĕпчевсем ирттерсе Муркаш районĕн территорийĕнче мĕнле йывăçсем, тĕмсем ӳсни пирки пĕлнĕ.

Калайкасси, Юнкă, Кашмаш, Шетмĕпуç тата Нискасси шкулĕсенчи профиль лагерĕсем шкулсем çумĕнчи профиль лагерĕсенче воспитани ĕçне мĕнле йĕркеленин конкурсне активлă хутшăнчĕç. Нискасси тата Юнкă, Кашмаш, Калайкасси шкулĕсем уйрăм номинацисенче хăйсене лайăх енчен кăтартса пачĕç.

Районти вĕрентӳ учрежденийĕсем хушшинче «Ылтăн тĕк – 2008 çул» республика тата район конкурсĕсем иртрĕç. Çĕнтерӳçĕ конкурс кубокне Тыр-пул уявĕн кунĕнче тивĕçет.

Чуманкассипе Мăн Сĕнтĕр шкулĕсем тата Муркаш лицейĕ ялсене тирпей-илем кĕртессипе, симĕслентерессипе ирттерекен республика конкурсне хутшăнчĕç.

Июнĕн 17-мĕшĕнче Муркаш шкулĕн стадионĕнче çул çитмен çамрăксемпе çуллахи ĕçпе кану лагерĕсен 4-мĕш район спартакиади иртрĕ. Унта ĕçпе кану лагерĕсем 13, çул çитмен çамрăксен ĕç бригадисем 5, шкул çумĕнчи сиплев лагерĕсем 1 хутшăнчĕç. Командăсен зачетĕнче Муркаш лицейĕпе Кашмаш шкулĕ çĕнтерӳçĕсем пулса тăчĕç.

Сиплев лагерĕсен воспитанникĕсемпе ĕçлеме шкулта ĕçлекенсене, физкультура учителĕсене, ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн тренерĕсене, медицина ĕçченĕсене те явăçтарма тивет. Чи малтанах вара çу кунĕсенчи ĕç-хĕлпе тулли мар, çителĕксĕр пурăнакан çемьесенчи, тăлăх ачасене тивĕçтернĕ.

Ĕçпе кану юнашар пулмалла. Çавна май лагерьсенче культурăпа воспитани мероприятийĕсене ирттерессине те тĕпе хунă. Программа шутĕнче походсем, экспедицисем, экскурсисем пулнă.

Çавна та каласа хăвармалла. Районти ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă вăхăтлăха 89 вĕренекене ĕçе вырнаçтарнă. Ял условийĕсенче лагерь пурнăçĕ ĕçсĕр пулма пултараймасть. Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан чылай шкулсем кĕр кунĕсенче база ял хуçалăх предприятийĕсене пулăшрĕç, хăйсен хушма çĕр участокĕсем çинче ĕçлерĕç.

Пĕтĕмĕшле шутласан, районти вĕренекенсен 47 процентĕнне ĕçпе канăвне йĕркелеме май килчĕ. Анчах та ку кăтарту пысăк мар. Вĕрентӳ ĕçченĕсен августри канашлăвĕнче çакăн пек задача лартнă: пур ачана та çу кунĕсенчи канăва явăçтармалла тата пурне те шывра ишме вĕрентмелле. Апла пулсан ĕçлемелли çук марха.

**З. ДИПЛОМАТОВА,**
**район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ.**

## Районти административлă комиссире

# Урам – обществăлла вырăн

Ял урамĕ ку е вăл уйрăм хаçалăх территорийĕ пулма пултараймасть. Унпа пурте усă кураççĕ. Кашни çемье тивĕçĕ вара – пӳрт-çурт умĕнчи лаптăка тирпейлесе пăхса тăрасси. Гражданин хăйĕн тивĕçне пурнăçламасан, ăна кун пирки саккун аса илтерет.

Район администрацийĕ çумĕнчи административлă комисси октябрĕн 16-мĕшĕнчи ларура шăпах урама çӳпçаппа вараласа, йытăсене кăкармасăр чуптарса саккуна пăснă граждансене пăхса тухрĕ.

Мăн Шашкарти В.Н. Мерлова ку таранччен çак комиссие виçĕ хут та чĕнтернĕ, штрафсем панă. Вăл çаплах ӳкĕте кĕресшĕн мар. Йыттине кăкарма вăхăт тупаймасть. Урам хушшине купаласа хунă тислĕк купине пуçтарса кĕртеймест.

Хăш-пĕр ял çыннисен çакăн пек йăла пур – урам варрине вутă тухса купаласси. Пуянлăхĕпе мухтанаççĕ пулас: курăр, манăн вутă шаршанĕ пур! Мерлов вара вĕсенчен те ирттернĕ, тислĕк урама кăларнă.

Çак ялти М.П. Храмован мăшăрĕн кутăнлăхне пула асапланма тивет. Вĕсене административлă комиссие пĕрре мар чĕнтернĕ. Йыттине кăкарманшăн штраф панă, урамри вак чулсене пуçтарманшăн асăрхаттарнă. Мария Петровна каланă тăрăх, вăл йыттине те урамран çавăтса кĕрсе сăнчăра лартать, вак чулне те картишне кĕртет. Мăшăрĕ тытать те йыттине вĕçертсе ярать, чулне урама кăларать. Штраф тӳлеме укçи нумай тейĕн.

Мăн Шашкарти Г.К. Назарова йыттине кăкарманшăн тата çӳп-çапа пуçтарманшăн, С.В. Васильева урамри чул купине кĕртменшĕн, Шупуçĕнчи М.Н. Грачева йывăç тураттисене юраман вырăна кăларса пăрахнăшăн асăрхаттарнă, штраф панă.

Ял урамĕ картиш мар. Кунта вутă шаршанлама, çӳп-çап кăларса тăкма, йытăсене чуптарма юрамасть. Çакна ăнланманнисене административлă кодексра ответ тыттарма пăхнă. Урама тирпейсĕрлесен асăрхаттараççĕ е 200 тенкĕрен пуçласа 1000 тенкĕ таран штраф параççĕ. Йытăсене кăкармасан 500 тенкĕрен пуçласа 1000 тенкĕ таран штраф хураççĕ.

**ХАМĂР ИНФ.**





**Продаю оптом (дешевле) и в розницу купальники закрытые разных размеров, плавки для мальчиков и взрослых, шапки непромокаемые – все для бассейна. Тел.: 8-906-387-77-08.**

**Ăратлă така çухалнă. Кăвак тĕслĕ, хура çилхеллĕ. Куракансене çак телефонсемпе пĕлтерме ыйтатпăр: 2-25-63, 8-905-198-07-24. Пĕлтерекене хавхалантарма шантаратпăр.**

**Продаю трехкомнатную квартиру в с. Моргауши, в жилых помещениях дубовый паркет. Тел.: 8-909-304-13-03.**

**Татса çурнă вутă сутатăп. Тел.: 8-919-668-64-90.**


## Юбилей

### Саламлатпăр

«Новая Юнга» хуçалăхра 1980–1990 çулсенче вăй хунă пур водительсене те, кунпа пĕрлех Юнкăри вăтам шкулăн автобус водительне **Н.Л. МОСКАЛЕВА** Автомобиль транспортĕнче ĕçлекенсен кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Кунсеренех рейса тухнă май эсир палăртнă плансене пурнăçа кĕртессишĕн çине тăнă. Кунпа пĕрлех кунта пурăнакансене вĕсен проблемисене татса пама пысăк пулăшу панă. Сире хăвăрăн тимлĕхшĕн тата çулланнă çынсем тĕлĕшпе тимлĕ пулнишĕн пысăк тав сăмахĕ калатăп. Пурсăра та ырă сывлăх тата ăнăçусем сунатăп. Нумай çул хушши сирĕн çемьесенче телей хуçалантăр!

Салампа «Новая Юнга» колхоз колхозникĕ, Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕ, Юнкă ялĕнче пурăнакан

**К.Н. ЯГОДКИН.**

Хисеплĕрен те хисеплĕ, хаклăран та хаклă çывăх çыннăмăра – **Александр Александрович ЧУГУНОВА** 50 çул тултарнă ятпа чĕререн саламласа ырлăх-сывлăх, тулли телей, вăрăм кун-çул сунатпăр.

Тин çеç эс пĕчĕк Сашăччĕ –
Халь акă аллăра.
Тин çеç çарран чупатăнччĕ
Сип-симĕс улăхра.
Васкаç, чупаççĕ-çке çулсем.
Вăрăм ĕмĕр пултăр санăн пурнăçра,
Савнă мăшăр кулли çиçтĕр сан çумра,
Ачу хисеплĕн пăхтăр сан çине,
Мăнуксем чупса çӳреччĕр санăн çумăнта.

**Саламлаканĕсем: ашшĕ, амăшĕ, мăшăрĕ, хĕрĕ, аппăшĕсем, çывăх тăванĕсем, çывăх юлташĕсем.**

Хисеплĕ, чи хаклă та чунтан юратнă аннене, ăшă кăмăллă асаннене, кукамая, хунямана, хаклăран та хаклă тăванăмăра – Турай ялĕнче пурăнакан **Лидия Ивановна СТЕПАНОВАНА** юпа уйăхĕн 23-мĕшĕнче 75 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Юбилей ячĕпе саламласа сана мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, сурпан пек вăрăм кун-çул, тапса тăракан çăл куç пек иксĕлми вăй-хăват, тулли телей, çирĕп сывлăх сунатпăр. Çирĕп сывлăхпа татах та нумай çул ачусемпе, мăнукусемпе савăнса пурăнмалла пултăр. Эс пурришĕн савăнатпăр, хамăра çав тери телейлĕ туятпăр. Тайма пуç сана пуриншĕн те.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕпе кинĕсем, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăрăн – Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Рим Михайлович СМОРОДИНОВĂН** паян çуралнă кунĕ – юбилей. Тапса тăракан çăл куç пек иксĕлми вăй-хăват, тумхахсăр кун-çул, çирĕп сывлăх, телей, икĕ ĕмĕр сунатпăр. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн савăнатпăр.

**Салампа мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем.**



Юратнă мăшăра, кăмăллă аттене – Çеменкасси ялĕнче пурăнакан **Евгений Павлович СИМАКОВА** 60 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн савăнатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕ, хĕрĕ, мăнукĕ, тăванĕсем, тус-юлташĕсем.**



Юратнă аннене, хĕре, асаннене – Ярапайкасси ял тăрăхне кĕрекен Ярапайкасси ялĕнче пурăнакан **Валентина Вениаминовна СУХОВАНА** 50 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Юбилей ячĕпе саламласа сана мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Вăрăм кун-çул, тулли телей, çирĕп сывлăх пулччăр. Çирĕп сывлăхпа татах нумай çул ачипе, 2 мăнукĕпе савăнса пурăнмалла пултăр. Хаклăран та хаклă аннемĕр! Эс пурришĕн савăнатпăр, хамăра çав тери телейлĕ туятпăр. Тайма пуç сана пуриншĕн те.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕпе кинĕ, 2 мăнукĕ, ашшĕпе амăшĕ, хăтипе тăхлачи, çывăх тăванĕсем.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления


Мир окон и дверей
☎ 29-80-60

ОКНА пластиковые
Thyssen ФАВОРИТ KBE NOVOTEX Thyssen ФАВОРИТ KBE NOVOTEX
от ведущего производителя Чувашии теперь... в МОРГАУШАХ
Thyssen ФАВОРИТ KBE NOVOTEX Thyssen ФАВОРИТ KBE NOVOTEX
Здание "СЕЛЬХОЗТЕХНИКА", 2эт
8-927-669-80-60

*Набор по уходу за окнами и москитная сетка – в подарок! Скидка до 25 %.*

**Спутниковые антенны ТРИКОЛОР с установкой, регистрацией и обслуживанием. Тел.: 8-905-345-77-19. 2-10.**

**КПКГ «Агрокредит» принимает сбережения от пайщиков, выдает займы пайщикам. Ждем вас по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. Тел.: 2-18-13, 8-927-995-03-41. 3-13.**

**Халăхран лайăх хакпа ĕне, тына, вăкăр туянатпăр. Тел.: 68-5-89, 8-909-304-08-81. 2-5.**

**Продаю трехкомнатную квартиру со всеми удобствами, хозпостройками в с. Юськасы. Тел.: 8-919-663-61-22.**

**Март уйăхĕнче пăруламалли хĕрлĕ тĕслĕ тынашки сутатăп, çамки шурă. Тел.: 8-927-865-63-51.**


Коллектив Большесундырской средней школы выражает глубокое соболезнование по поводу кончины бывшего учителя, ветерана Великой Отечественной войны
**ДАНИЛОВА Михаила Михайловича.**

Муркашри вăтам шкул коллективĕ кунта водительте ĕçлекен А.А. Семеновăн
**АМĂШĔ**
вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.


Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38.
Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Белов А.П.
Номер подписан 24.10.2008 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3608.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.